ПĔЛТЕРӲ

# Фонд пулăшăвĕ курăмлă

***2018 çулта Ятарлă медицина страхованийĕн /ОМС/ фончĕ нормăланă страховани сапассĕнчен больницăсем валли медтехника туянма тата юсаттарма, медицина ĕçченĕсен квалификацине ӳстерме 78,4 миллион тенкĕ уйăрнă.***

ОМС фончĕн директорĕ Вячеслав Александров пĕлтернĕ тăрăх, çак укçа-тенкĕн пысăк пайĕпе – 54 миллион тенкĕлĕх – республикăри медицина организацийĕсем валли оборудовани туяннă. Çапла майпа Вăрçă ветеранĕсен госпиталĕ, Çĕнĕ Шупашкар хула больници, Васкавлă медицина пулăшăвĕн больници çĕнĕ йышши УЗИ аппарачĕсемпе пуянланнă. Хĕрлĕ Чутай тата Канаш районĕсен тĕп больницисене çак аппарат раштав уйăхĕнче çитмелле.

Шупашкарти 1-мĕш тата 2-мĕш больницăсене сипленме çӳрекенсем малашне хăйсем патĕнчех флюорографи тухма пултарĕç. Куславкка районĕн тĕп больници валли те куçса çӳрекен рентген аппарачĕ туяннă. Çак аппарат пулăшнипе пациент ларнă е выртнă чухне те, кăткăс ытти лару-тăрура та рентген снимокĕсем тума май килет.

Çитес кунсенче республикăри Офтальмологи больницине оптика когерент томографĕ килмелле. Унпа куç сетчаткин чирĕсене тупса палăртма усă кураççĕ. Ку хатĕрпе тĕпчени ытти меслетсенчен чылай уйрăлса тăрать, вăл сетчатка сийĕсене витĕр курма май парать. Раштав уйăхĕнче çак больницăнах куçăн биометри параметрĕсене палăртакан хальхи йышши аппарат килмелле. Биометри катарактăпа, глаукомăпа, куç органĕсен ытти чирĕсемпе аптăракансене тĕрĕс сиплев çирĕплетме кирлĕ. Контактсăр биометри мелĕн куç органĕсен мĕнпур чирĕ пирки тĕрĕс информаци парать.

Хулан клиника больници валли туяннă эндоскоп оборудованийĕ диагностика тата сиплев мелĕсене анлăлатма пулăшать. Эндоскоппа нумай енлĕ усă курнине шута илсен кунта тĕлĕнмелли çук.

Апат ирĕлтерекен органсен чирĕсене вăхăтра тупса палăртнинчен ырри çуккине каламасăрах пурте пĕлеççĕ. Муркаш районĕн тĕп больници тата Çĕнĕ Шупашкарти медицина центрĕ фиброгастроскопсемпе пуянланчĕç.

Больницăсен реанимаци уйрăмĕсене хальхи йышши оборудованипе тивĕçтерессине пысăк тимлĕх уйăрнă: Çĕнĕ Шупашкар хула больници тата Вăрнарти тĕп больница валли ӳпкене искусствăлла майпа сывлаттаракан аппаратсем туяннă, раштав уйăхĕнче Елчĕк районĕн тĕп больницине кравать çумĕнчи мониторсем çитмелле.

Чăваш Енĕн чи аякри районĕнче – Шăмăршă тăрăхĕнче – пурăнакансен шăлĕсене сиплеме стоматологи аппарачĕ туяннă. Вăрмар районĕн тĕп больницине чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсен диагностики валли виçĕ электрокардиограф тата пуç миминчи юн тымарĕсене тĕрĕслеме электроэнцефалографи комплексĕ вырнаçтарнă. Патăрьел районĕн тĕп больницин хирурги уйрăмне операцисем ирттернĕ чухне питĕ кирлĕ светильниксем çакнă.

Çĕнĕ Шупашкарти медицина центрĕн ача-пăча поликлиникинче «Пуçламăш медицинăпа санитари пулăшăвĕ паракан медицина организацийĕн çĕнĕ тĕсне туса хурасси» проектпа килĕшӳллĕн перекетлĕ технологисем пурнăçа кĕреççĕ. Çак проектпа килĕшӳллĕн ку больница валли фонд укçи-тенкипе учрежденин сиплев тата диагностика ĕçĕ-хĕлĕ валли 7,5 миллион тенкĕлĕх 15 единица медицина оборудованийĕ – операцисем тумалли лоркомбайнран пуçласа медицина светильникĕсем таран – туяннă.

Фонд укçипе хаклă йышши медицина оборудованийĕ туяннисĕр пуçне медицина техникине 22 миллиона яхăн тенкĕлĕх юсанă. Республикăри кардиологи диспансерĕнче икĕ ангиографи установкине юсанă. Унсăрăн чĕрен, пуç мими, юн тымарĕсен чирĕсене тупса палăртма йывăр. Çавăн пекех Шупашкарти ача-пăча клиника больницинче тата Шупашкар районĕн тĕп больницинче магнитрезонанс томографĕсене, Шупашкарти тĕп больницăра фиброгастроскопа, Çĕнĕ Шупашкарти медицина центрĕнче феталь мониторне, республикăри Ветерансен клиника госпиталĕнче пӳрери чулсене сасă хумĕсемпе аркатма пулăшакан литотриптера юсанă.

Квалификацие ӳстерессии сывлăх сывхлавĕн ĕçченĕсене специальноçпа ĕçлеме кирлĕ тĕп услови шутланать. 2018 çулта ОМС фончĕн нормăланă страховани саппасĕн шутĕнчен 27 медицина организацийĕн 267 тухтăрĕ пĕтĕмĕшле тухтăр практики, терапи, акушерство тата гинекологи, онкологи, педиатри, эндокринологи, кардиологи, ытти енĕпе професси ăсталăхне пысăклатнă. Çак шутран 92-шĕ ялсенче ĕçлеççĕ, республикăри районсенче пурăнакансене медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерессин пахалăхне ӳстерме хутшăнаççĕ. Çак тĕллевпе 2,5 миллион тенкĕ уйăрнă.